# Çĕнтерӳ ялавĕ

Муркаш район хаçачĕ

1944 çулхи майăн 5-мĕшĕнчепе тухать

57 (7482) № ✻ Шăмат кун, 2007 çулхи июлĕн (утă) 14-мĕшĕ ✻ Хакĕ ирĕклĕ


**“Радиохум – хаçат страницинче: халăх тата влаç, тĕллевсем пĕр пек, ĕçсем те пĕрлех”**

## Ыйтусене пĕрлех татса парар

***Паянтан пуçласа çак çĕнĕ ярăмпа малалла эсир, хаçат вулакансем, тăтăшах паллашма пуçлăр. Ăна йĕркелесе янин сăлтавĕ те ахальтен мар. Пирĕнтен кашниех кунран кун лайăхрах пурăнма тăрăшать. Çавна май час-часах тĕрлĕ проблемăсене татса пама тивет. Вăл е ку ыйту хуравĕсене пĕлме е пулăшу ыйтма вырăнти хăйтытăмлăх органĕсене килетпĕр. Вырăнти влаçăн чи пĕрремĕш тĕллевĕ шăпах вырăнти халăхăн пурнăçне лайăхлатассишĕн тимлесси-çке. Çавăншăнах чи тивĕçлисемшĕн хамăр сассăмăрсене паратпăр та суйлавсем вăхăтĕнче. Урăхла епле-ха? Пирĕн пурин те пĕр тĕллев вĕт: халăхăн та, влаçăн та тăван районăмăр аталантăр тесе тăрăшасси. Тăван Муркаш енĕмĕр вăйлă пулсан, районти халăх пурнăç шайĕ те ӳссех пырать. Ун пек чухне харпăр хăй проблемисене татса памалли çулсем те уçăлсах пыраççĕ.***

***Пĕр тĕллевпе ĕçлетпĕр, пурăнатпăр пулсан, сиксе тухакан ыйтусене те пĕрлех татса памалла. Район администрацийĕ çакăн çине питĕ пысăк тимлĕх уйăрать. Гражданĕсен ыйтăвĕсене вăхăтра татса парассине мала хурать. Çакна районта пурăнакансенчен килекен çырусемпе епле ĕçлени те кăтартса парать. Пирĕн вара, хисеплĕ вулаканăмăрсем, хамăр канăç паман ыйтусен хуравĕсене пĕлесех килет. Çапла вĕт. Асăннă ярăмри материалсем шăпах çавсем çинчен пулĕç те, сирĕн ыйтăвăрсене уççăнлăх кĕртĕç. Урăхла каласассăн, эсир район администрацине янă çырусен хуравĕсене хаçат урлă та пĕлĕр.***

***Ку çеç те мар. Гражданĕсем тепĕр чухне вăл е ку ыйтупа çӳлти органсене çырусем яраççĕ. Ыйту кун пек чухне хăвăртрах та вирлĕрех татăлассăн туйăнать пек пулĕ те. Анчах та район шайĕнчи ыйтусене района “сиктерсе” хăварса татма çук пулĕ. Вĕсене те районтах татса пама тивет. Апла пулсан çавăн йышши çырусем епле татăлнипе те паллаштарăпăр малашне.***

***Малтанлăха вара эпĕ район администрацийĕн ĕçĕсене йĕркелесе пыраканĕнчен А. В. КРАСНОВРАН кăçал районта пурăнакансем хускатнă ыйтусене епле татса панипе паллаштарма ыйтрăм.***

**– Александр Валерианович, районта пурăнакансенчен çырусем йышлă килеççĕ-и?**

– Малтанхи çак вăхăтрипе танлаштарсан, чылайрах. Акă, кăçалхи 2 –мĕш кварталта кăна пĕтĕмпе 21 çыру килчĕ граждансенчен. Ку вăл иртнĕ çулхи çак вăхăтринчен, 9 çыру ытларах пулать. Çур çулта вĕсен хисепĕ пĕтĕмпе 39 çитрĕ. Пĕлтĕр малтанхи çур çулта 17 çыру сахалтарах килнĕччĕ.

**– Çырусен йышĕ ӳссе пыни мĕн çинчен калать?**

– Районта пурăнакансем малаллах туртăнни пирки. Çакă вĕсен çырăвĕсенченех яр уççăн курăнать. Вĕсем пурнăçра пулса иртекен улшăнусенчен айккинче тăрса юлманни çинчен. ЧР Президенчĕпе республика Правительстви кĕртекен çĕнĕлĕхсем хăйсен пурнăçне уçă варкăш кĕртессине ăнланни çинчен. Çакă чăннипех те савăнтарать. Граждансенчен çырусем иртнĕ çулхи 4-мĕш кварталтан пуçласа ытларах килме пуçларĕç. ЧР Президенчĕ Н. В. Федоров Чăваш Республикинче автомобиль çулĕсене тăвассине хăвăртлатасси çинчен калакан Указне ал пуснă хыççăн районта пурăнакансенчен ялсем патне тата ялсенче асфальт çул сарассипе çыхăннă ыйтусемпе çырусем 3,5 хут ытларах килчĕç. Çавăн пекех граждансем картишсене, вĕсем патне пыракан çулсене хăт кĕртес, ялсенчи асфальт çулсене малалла тăсас ыйтусене хускатççĕ.

2-мĕш кварталта килнĕ çырусене уйрăммăн тишкерес пулсан çакна палăртмалла. Строительство ыйтăвĕсемпе 7 килнĕ вĕсем. Ку пĕтĕм çырăвăн 33 проценчĕ пулать. Çурт-йĕр ыйтăвĕсемпе 4 (19 процент), патшалăх тата общество ыйтăвĕсемпе 3 (14 процент), социаллă хӳтлĕх ыйтăвĕсемпе 2 (9,5 процент) çыру килнĕ.

Кăçалхи çур çулта килнĕ çырусене пĕтĕмĕшле тишкерни вара çакна кăтартса парать. Килнĕ пур çыруран ытларахăшĕнче (10 çыру) строительство ыйтăвĕсене хускатнă вĕсен авторĕсем. Общество ыйтăвĕсемпе çырнă çырусем 8. Вĕсенче ялта пурăнакансене çĕр хутшăнăвĕсемпе палăксем лартас ыйтусем канăçсăрлантарни палăрать. Çурт-йĕр ыйтăвĕсемпе çырнă çырусем 6, социаллă хӳтлĕх ыйтăвĕсемпе – 4. Каласа хăвармалла, социаллă ыйтусене татса панă чухне район администрацийĕн ĕçченĕсем ыйтусене вырăна тухса тĕпченĕ.

Палăртмалла, район администрацийĕнче пăхса тухнă çырусенчен 38,5 проценчĕ çӳлерех тăракан организацисенчен килнисем. Урăхла каласан, районта пурăнакансем вăл е ку ыйтăва татса пама республикăна е РФ шайне тухнă çырусем. Пăхса тухнă çырусенчен 49 проценчĕ – коллективлă çырусем.

Уйрăммăнах палăртмалла, район пуçлăхĕ патĕнче хăйсен ыйтăвĕсемпе кăçалхи çур çулта 56 çын пулнă.

**(Вĕçĕ 2-мĕш стр.).**

**Цифрăсен чĕлхипе**

## Малаллах утăмлатпăр-ха

Кăçалхи январĕн 1-мĕшĕ тĕлне районĕпе яланлăх хуçалăхсем 13346 шутланнă. Вăл шутран граждансен харпăрлăхĕнчисем – 13320. Пĕтĕмпе 36,9 пин çын пурăнать. Вăл шутран 3145 çын – Муркашра. Ĕçлеме пултаракансем 18230-ăн. Ача сачĕсене çӳрекенсем – 1275, шкулсенче вĕренекенсем – 4855, пенсионерсем – 10287.

Çулталăк пуçланнăранпа 471974,3 пин тенкĕлĕх продукци туса хатĕрленĕ тата тĕрлĕрен ĕçсем пурнăçланă. Иртнĕ çулхи пĕрремĕш çур çулхипе танлаштарсан вăл 146,3 процент пулать. Ял хуçалăх продукцине 124288,5 пин тенкĕлĕх (104,7 процент), промышленность продукцине 347685,8 пин тенкĕлĕх (170,6 процент) туса кăларнă. Уйрăмах ӳсĕмлĕ ĕçленĕ предприятисенчен «Муркашри кирпĕч завочĕ» уçă акционер обществине, «Сундырь-Хлеб» чикĕллĕ яваплăхлă обществăна, «Моргаушагропромхимия» уçă акционер обществине, «Моргаушагропромснаб» предприятие, «Сеспель», «Моргауши-Хлеб», «Милград» чикĕллĕ яваплăхлă обществăсене, Мăн Сĕнтĕрти пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăх предприятине, «Моргаушрайгаз» филиалне, Муркаш почтамтне асăнмалла.

Районăн бюджет тупăшĕ 36002,2 пин тенкĕпе (иртнĕ çул 13569,0 пин тенкĕ) танлашнă. Вăл шутран ял тăрăхĕсен хăйсен тупăшĕ – 3971,1 пин тенкĕ (134,1 процент) пулнă.

Кăçалхи январь – июнь уйăхĕсенче 35926,2 пин тенкĕлĕх (105,7 процент) тӳлевлĕ пулăшусем панă. Пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăх муниципаллă предприятийĕн ертсе пыракан компанийĕпе «Моргаушрайбыт» чикĕллĕ яваплăхлă общество ку енĕпе ӳсĕмлĕ ĕçленĕ пулсан, «Моргаушрайгаз» предприяти тӳлевлĕ пулăшу парассине чакарнă.

Ваккăн сутмалли тавар çаврăнăшĕн калăпăшĕ 208440,8 пин тенкĕпе танлашнă е иртнĕ çулхи çав вăхăтринчен 33,5 процент пысăкрах. Мăн Сĕнтĕр райповĕпе тавар çаврăнăшĕн калăпăшĕ 63435,0 пин тенкĕлĕх (122,2 процент), Муркаш райповĕпе 101114,0 пин тенкĕлĕх (133,5 процент) пулнă.

Обществăлла апатлану предприятийĕсем япăх мар ĕçлесе пыраççĕ. Пĕтĕмпе 23341,4 пин тенкĕлĕх апатлантарнă е иртнĕ çулхи çав вăхăтрипе танлаштарсан 120,7 процент чухлĕ.

Çулталăк пуçланнăранпа 3061,6 тонна (118,8 процент) аш-какай туса илнĕ. Ял хуçалăх предприятийĕсемпе ку хисеп 1292,8 тонна, хресчен (фермер) хуçалăхĕсемпе 69,1 тонна тата уйрăм çынсен килти хушма хуçалăхĕсемпе 1699,7 тонна.

Районĕпе пĕтĕмпе 23901,5 тонна сĕт суса илнĕ (102,1 процент). Кунта ӳсĕм ытларах уйрăм çынсен хушма хуçалăхĕсен шучĕпе пулса пырать. Мĕншĕн тесен ял хуçалăх предприятийĕсенче те, хресчен (фермер) хуçалăхĕсенче те пĕтĕмĕшле сĕт суса илесси чакнă. Кашни ĕнерен вăтамран 2060,0 килограмм сĕт сунă (105,8 процент). Ял хуçалăх предприятийĕсенче сĕт сăвасси 2,2 процент ӳснĕ, 2007,0 килогрампа танлашнă.

Самăртма хупнă мăйракаллă шултра выльăхсем талăкра вăтамран 564,0 грамм (иртнĕ çул 504,0 грамм), сыснасем 313,0 грамм (иртнĕ çул 344,0 грамм) ӳт хушнă.

Çамрăк выльăхсем илесси чакнă. Пĕтĕмпе 1717 пуç пăру (84,4 процент), 11950 пуç çура (80,2 процент) илнĕ.

**(Вĕçĕ 2-мĕш стр.).**

**Хаксем**

## Çăкăр хакланчĕ

Вăл е ку тавар хакĕсем çумăр хыççăнхи кăмпасем евĕр ӳснине хăнăхса та çитерееς çук. Акă пирĕнтен чылайăшĕ асăрхарĕ ĕнтĕ сентресем çинчи çăкăр, çăнăх тата ытти хăш-пĕр тавар хакĕсем хăпарнине. Муркаш районĕнчи лавккасенче çăкăр вунă тенкĕ те тăхăрвунă пус тăрать. Çакă паллах пĕчĕк хак мар, анчах Шупашкар хулинчи хăш-пĕр лавккасенче вун икĕ тенкĕне çитни те пур.

Çăкăр пирĕн пурнăçра паллă вырăн йышăнать. Çавăнпа та çынсене çакăн пек улшăну пăшăрхантарать те. Палăртса хăвармалла, ӳсĕм чи малтан тĕш-тырă рынокĕпе çыхăннă. Çăкăр-булка изделийĕсене хатĕрлемелли тĕш-тырăн ытларах пайне ытти регионсенчен кӳрсе килеççĕ. Унти лару-тăру та вара савăнмаллиех мар. Экспертсем пĕлтернĕ тăрăх вăл вырăнсенче май уйăхĕнче питĕ шăрăх çанталăк тăнă. Çавăнпа та иртнĕ çулхи тырă хакĕ ӳсрĕ, çакă майĕпен çĕнни çине те куçать.

Раççей Федерацийĕн ял хуçалăх министрĕ А. Гордеев пĕлтернĕ тăрăх вара тĕш-тырă хакĕ татах та ӳсет. Пирĕн республикăра пурăнакансен кăшт лăпланмалли самант та пур. Чăвашстат пĕлтернĕ тăрăх, çулталăк пуçланнăранпа çăкăр хакĕ (пĕр килограмм пусне) 1,87 тенкĕ ӳснĕ. Çав хушăрах Саранскра 2,25 тенкĕ, Чулхулара 2,39 тенкĕ, Ижевскра 3 тенкĕ çурă хăпарнă. Пермь тăрăхĕнчи статистикăна ĕненес пулсассăн вара çулталăк пуçланнăрнпа çăкăр хакĕ пачах та ӳсмен.

Çапах та хаксене ытлашши хăпартса ямĕç. Ку енĕпе ятарлă служба ĕçлет. Чăваш Республикин Министрсен Кабинечĕн 2004 çулхи июнĕн 29-мĕшĕнчи 174 номерлĕ постановленийĕпе килĕшӳллĕн тарифсен енĕпе ĕçлекен республикăри служби хаксен чи çӳллĕ шайран иртсе каймалла мар коэффициентне йĕркеленĕ. Çавăнпа та хаксем çав шайран иртсе каймĕç.

**Р. ИЛЛАРИОНОВА.**

**Ачасен сывлăхĕшĕн**

## Хушма укçа-тенкĕ уйăрнă

Республикăри шкулсенче ĕçпе кану лагерĕсенче пĕрремĕш смена вĕçленчĕ. Шкул ачисем каннипе пĕрлех хăйсен сывлăхĕсене çирĕплетрĕç. Ку тĕллевпе РФ Социаллă страховани фончĕн Чăваш Республики тăрăх регион уйрăмĕпе 33,3 миллион тенкĕ тăкакланă. Ку хисеп вара кăçал пĕтĕмпе 113 миллион тенкĕпе танлашмалла.

Çак кунсенче РФ Патшалăх Думин депутачĕсем, «Единая Россия» парти фракцийĕн членĕсем Константин Косачевпа Павел Семенов çине тăнипе фонд уйрăмĕ республикăри ачасен сывлăхне çирĕплетме Раççей социаллă страховани фондĕнчен татах 10 миллион тенкĕ укçа илме пултарнă.

Çапла вара бюджет сферинче ĕçлекенсен ачисем валли путевкăсем ытларах уйăрма, сывлăх сиплевĕн лагерĕсенчи пулăшу ĕçĕсен пахалăхне лайăхлатма май килĕ. Кунпа пĕрлех хронически чирсемпе чирлекен ачасем валли çулталăкĕпех ĕçлекен санатори лагерĕсенче вырăнсем ытларах пулĕç. Кунта вĕсем канма кăна мар, хăйсен сывлăхĕсене самай çирĕплетме те пултарĕç.

**Пултаруллă яш-кĕрĕм**

## Тав çырăвĕсене тивĕçнĕ

***Раççей çамрăкĕсен кунне халалласа районта «Королевская ночь» кану каçĕ ирттерни пирки хаçатра çырса кăтартнăччĕ. Уява халалланă мероприятире районти пултаруллă та хастар çамрăксенчен чылайăшĕ районăн экономикăпа социаллă пурнăç аталанăвне тивĕçлĕ тӳпе хывнишĕн район администрацийĕн пуçлăхĕн Тав çырăвĕсене тивĕç пулчĕ. Вĕсем хушшинче:***

– **Вера Вениаминовна КАРПОВА**, Муркаш райповĕн налук тытассипе ĕçлекен тĕп специалисчĕ;

– **Алина Юрьевна КАЗАКОВА**, «Сказка» кафетери поварĕ;

– **Валентина Владимировна АБРАМОВА**, «РГС – Поволжье» – «Чăваш Республикинчи тĕп управленийĕ» чикĕллĕ яваплăхлă обществăн филиалĕн Муркашри страховани пайĕн офис суту-илĕвĕн менеджерĕ;

– **Оксана Михайловна КОВАЛЕВА**, Чуманкасси шкулĕн пуçламăш классен тата акăлчан чĕлхин учителĕ;

– **Александр Юрьевич АТЛАСКИН**, «Чувашская энергосбытовая компания» уçă акционер обществин Муркашри филиалĕн инженер-инспекторĕ;

– **Олимпиада Михайловна СЕМЕНОВА**, «Визит» магазинăн аслă сутуçи;

– **Эльза Эрастовна ЕФРЕМОВА**, район администрацийĕн вĕрентӳ, çамрăксен политики тата физкультурăпа спорт пайĕн информаципе методика центрĕн методисчĕ;

– **Мая Ивановна НИКОЛАЕВА**, районти тĕп больницăн фельдшер-лаборанчĕ;

– **Светлана Викторовна САВЕЛЬЕВА**, районти тĕп больницăн эндоскопи кабинечĕн медицина сестри;

– **Наталья Юрьевна БИРЮКОВА**, Муркаш почтамчĕн çыхăну операторĕ;

– **Ольга Николаевна ГОЛУБЕВА**, Муркаш почтамчĕн информаци пункчĕн çыхăну операторĕ;

– **Сергей Константинович ВОЛКОВ**, «Моргаушрайгаз» филиалĕн газпа тивĕçтерес енĕпе ĕçлекен служба́н газ оборудованийĕпе усă курассин тата юсассин 3-мĕш разрядлă слесарĕ;

– **Николай Иванович АЛЕКСАНДРОВ**, «Ударник» хуçалăхăн 1-мĕш сĕт-çу фермин машинăпа ĕне сăвакан операторĕ;

– **Николай Николаевич ЗАРУБИН**, Суворов ячĕпе хисепленекен хуçалăх механизаторĕ;

– **Ольга Николаевна ЯКОВЛЕВА**, ЧР Сывлăха сыхлас ĕç тата социаллă аталану министерствин районти социаллă хӳтлĕх пайĕн ертсе пыракан специалист-эксперчĕ.

**Юбилей**

## Саламлатпăр

Хаклăран та хаклă çыннăмăра, юратнă мăшăрăма, юратнă аннене – Анаткас Апаш ялĕнче пурăнакан **Нина Геннадьевна СОКОЛОВАНА** 50 çулхи юбилей ячĕпе чун-чĕререн саламлатпăр.

Мăшăрăм, аннеçĕм, тăванăм, эсĕ пирĕншĕн çĕр çинчи чи çывăх çын. Эс пурри – пирĕн савăнăç, пуянлăх. Эсĕ ырă кăмăлупа, ĕçченлĕхӳпе, сăпайлăхупа палăрса тăратăн. Юбилей ячĕпе саламласа сана эпир ырлăх сывлăх, телей, ăнăçу, тату пурнăç сунатпăр, хуйхи-суйхи сирĕнтен пăрăнса иртчĕр.



Пурнăç çулĕ пулчĕ такăр мар,
Утса тухма пулчĕ çăмăл мар.
Икĕ ывăл, хĕр ӳстертĕн,
Вăй-хална эс шеллемерĕн
Халĕ савăнан эс вĕсемпе.
Нумай çул ĕçлерĕн фермăра
Яту пултăр санăн хисепре.
Ыр сунатпăр, тав тăватпăр,
Сан умра пуçа таятпăр
Яланах пул эсĕ пирĕнпе.

**Саламлаканĕсем: мăшăрĕ, хĕрĕ, 2 ывăлĕ, çывăх тăванĕсем.**